# Вăрçă ветеранĕ 95 çулта

Юнкă ялĕнче пурăнакан Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ, Сталинградшăн пынă çапăçусене хутшăннă Григорий Илугин хăйĕн 95 çулхи юбилейне паллă турĕ. Çав ятпа ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – пай пуçлăхĕ Лилия Тарасова, РФ Пенси фончĕн районти пайĕн пуçлăхĕ Ирина Гришина саламларĕ, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунчĕ. Юбиляр хăйĕн ачалăх, вăрçă çулĕсене аса илнĕ, кăçал вара Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Сталинградшăн пынă çапăçусенче нимĕç фашисчĕсене çапса аркатнăранпа 75 çул çитнине халалласа Волгоградра иртнерĕ уяв мероприятийĕсене хутшăнни пирки хавхаланса каласа пачĕ.

1) 2019 №

1) 2019 №